26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
11
ЭРНЕКУН
29(6524) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет шкулĕн хисеплĕ задачисем

Совет шкулĕ вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çур çулне кĕчĕ. 1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулĕ вĕренекенсен пĕлӳне воспитани парас ĕç лайăхланнине палăрса тăрать. Пурне те хут вĕрентмелли закона, вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсене пурнăçа кĕртес, арçын ачасемпе хĕр ачасене уйрăммăн вĕрентес тата çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе те сахал мар ĕçсем тунă. Апла пулин те, шкулсем пĕтĕмĕшле çак задачăсене пăлтах пурнăçа кĕртеймен-ха.

Çамрăксене вĕрентсе воспитани парассипе партипе правительство вăрçă вăхăтĕнче те, яланхи пекех, тимлĕн тăрăшаççĕ. Халăха вĕрентес ĕçе миллион-миллионĕпе укçа-тенкĕ хываççĕ. Шкулсен хисеплĕ тата вĕренме кирлĕ хатĕрсем халĕ пурне те вĕрентес закона тивĕçлĕ пурнăçа кĕртме, вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх организацилеме май параççĕ. Çапах та хăшпĕр районсенче закона пурнăçа кĕртмен. Пăрачкав, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче чылай ачасем шкул тулашĕнче юлнă. Ку ... районсенче ... вĕренекенсен хисепĕ чакнă. Шкулсене пăрахнă ачасем те сахал мар. Шкулсенче вĕренӳ çулĕ çӳреме пăрахнă ачасене шкула тавăрас ĕçе хăшпĕр вырăнсенче сахал тимлеççĕ.

Вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулĕ итогĕсем çутĕç органĕсем тата партипе совет, комсомол организацийĕсем шкулсене сĕтсе пырас ĕçе çирĕплетмеллине калаççĕ. Пурнăçшĕн те паллă, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарас тата шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелес тесен, çак ĕçре пысăк ĕçсене ăнăçлăн туса пыма лайăх условисем хатĕрлемелле. Шкулсенче вĕренекенсене, уйрăммăнах фронтовиксен ачисене, тумтирсем, апат-çимĕç енчен пулăшса тăмалла. Çак ĕçсене чылай çĕрте тивĕçлĕ пурнăçа кĕртмеççĕ-ха. Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Яваш шкулĕнче ачасем вут хутман çуртра вĕренеççĕ. Куславкка районĕнче вĕренекенсене вĕри апат çитерессине пурĕ те 5 шкулта кăна организациленĕ. Çĕрпӳ районĕнче пĕр ачасене вĕрентессине ... Кунта предметсене вĕрентмелли кружоксене, художествăллă пултарулăха, ачасен техникăллă станцийĕсене, мастерскойĕсене тата ытти нумай майсене ĕçе кĕртсе ячĕç. Шкул тулашĕнчи ĕçе лайăх йĕркелесессĕн, чи малтан, çутĕç органĕсене комсомол организацийĕсен ответлă. Анчах та юлашки вăхăтра ВЛКСМ Обкомĕ те, комсомолăн районсенчи тата пуçламăш организацийĕсем те пионер работникĕсене, çамрăксен ĕçне ... пĕрлешнĕ ... Çак ĕçре ... тарăн, ачасем художествăллă пултарулăхпа ĕçлес ĕçе çӳрĕклĕрех пăхмаççĕ. Пионерсемпе ĕçлекен пĕр вожатăйсем ... тĕплĕн пĕлсен пионерсемпе ... сахал интереслессĕ. Вĕренекенсен аслăрах çамрăксене ... майсене ... ĕçлеме пулать.

Калас пулать, вĕренӳпе воспитани ĕçне те çитменлĕхсем сахал мар-ха. Вĕренекенсен хушшинче çирĕп дисциплина çук. Уроксене тĕплĕн хатĕрлеменнине ... пĕлӳне ... калакан фактсене те нумай тĕл пулатпăр. Халĕ шкулсен пурне те вĕренӳпе ытлăрах тимлемелле. Апла пулсан çамрăк кадрсене пулăшас, ... çамрăк ... вĕренӳ ... ĕçлемелле. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарийĕчĕ те, район çутĕç пайĕсем те çав питех те кирлĕ ...

лĕ ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Вĕсем учительсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртсе çитермен. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарийĕчĕн тата район çутĕç пайĕсен учительсен кадрне хатĕрлес, учительсен пĕлĕвне ÿстерес енĕпе халех тăтăклă мерăсем йышăнмалла. Учительсен заочно вĕренӳне организацилесси, учительсене методика тĕлĕшĕнчен пулăшасси — куллен тумалли отвечлă ĕç пулса тăрать.

Совет шкулĕ çамрăксене çутĕç пĕлӳ, лайăх воспитани парса, Тăван çĕршыва юратакан, культурăллă, дисциплинăллă, ăраса сывлăхлă çынсене çитĕнтерсе кăлармалла. Вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх пăхмалла. Шкул вĕренекенсен хăйсен пурнăçĕнче халăх тума тивĕçлĕ ... мĕнле ... ытти ... кирлĕ. Шкулсенче вĕренекенсене çуллахи ... çумне ... Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарийĕчĕ районсенче учительсене ... вĕренекенсене çителĕклĕ ... хăйсем мĕн ... лайăх ... ĕçлемелле. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарийĕчĕ юлашки вăхăтра вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăннă. Шкулта вĕренекенсене учительсем хушшинче вĕренӳ ыйтăвĕсене социализмлă ăмăрту... пĕтерессе ... вĕренекенсемпе çине тăрса ĕçлемелле. Вĕсене учительсем тĕрĕс мар, юри ... тата ... ĕçсене ... тумалла. Вĕренекенсен пĕлӳне ... Шкулсенче ... ĕçне ... пулăшмалла. Учительсене ... РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарийĕчĕн акăш приказсене вĕренсе куллен ĕçе ... малла.

Вĕренӳпе воспитани ĕçĕнче учительсен тĕп вырăнта тăраççĕ. Вĕсен пурнăçне воспитани ĕçне лайăх йĕркелессине учительсем пĕлĕвне культуралăхĕ, унăн ĕçри опычĕ тата пурнăçлăхĕ татса парать. Апла пулсан, учительсен пĕлĕвне ÿстересси, вĕсен культурине ÿстересси — ку тĕлĕшпе çутĕç органĕсене пысăк опыт пур. Вăл опыта çителĕклĕ туса çул курса, учительсене хăйсен ĕçне пĕлӳ ĕçне ... пыма ... Учительсен кадрĕсене хатĕрлесе тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлес пулать.

Совет шкулĕ умĕнче тăракан задачăсене çутĕç работникĕсем пурне те пурнăçа кĕртме май çук. Совет шкулĕ çамрăксене хамăр пăттăр çĕршыва тивĕçлĕ çынсем пулмалла пăхса ÿстертĕр тесен, çутĕç органĕсене партипе совет организацийĕсене вĕсене çине тăрса пулăшмалла. Вĕсем шкул ĕçĕпе тĕп тĕллевĕсене тивĕçтерме ... Çак ĕçре ... хисеплĕ вырăн ...

Çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе уйрăммăн комсомол умĕнче пысăк ответлăх тăрать. Комсомол организацийĕсен шкулăн вĕренӳпе воспитани ĕçне пулăшмалла, ... вĕренекенсен ... вĕренекенсене ... пăхмалла. Комсомол çамрăкĕсене пирĕн тăвасăх мухтавлă паттăрсем пек пăхса ÿстерме, вĕренекенсемпе учительсем хушшинче шкул чаплăлăхне ÿстермелле ... кĕрешнĕ вĕçлĕ.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсен, çутĕç работникĕсене большевиксен тимлĕхне ĕçлесен, совет шкулĕ çамрăк ăрăва Сталин тавралăхне тивĕçлĕ пĕлӳпе воспитани парса çитĕнтерес задачăсене ... пурнăçа кĕртсе пырĕç.

Хĕрлĕ Çар артиллерийĕнчи офицерсемпе сержантсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав вăхăтра паттăрлăх хăюлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çак çулхи февраль 9-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар артиллерийĕнчи офицерсемпе сержантсене ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне пачĕ.

Совет Союз Геройĕн ятне пĕтĕмпе 51 офицерпа сержанта пачĕ. (ТАСС).

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завода

Юлашки юлташ ... инженер пулса ĕçлекен завод январь уйăхĕнчи заданине 107,2 процент пурнăçлать. Кинсбургский тата Щеглов юлташсем ертсе пыракан цехсен коллективĕсем уйăхри заданине 110 процент ытла пурнăçларĕç. Палла стахановецсем Интрилигатор, Данилова юлташсем куллен заданине тăтăшах 200—300 процент чухлĕ пурнăçлаççĕ. Çавăн пекех Дмитриенко юлташ та заданине кашни кунах 150—200 процент чухлĕ пурнăçлать.

Завод коллективĕ паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă куна çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илессишĕн вăйлăн чăмăртанса ĕçлет, пĕтĕм вăй хурса ĕçлет.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ йышăннă Указ тăрăх, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн малта пыракан ĕççынни депутачĕсен ялсоветне памалли куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тунă.

Вăл ялава, Чăваш АССР Совнаркомĕ тăратнă тăрăх, Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ парать.

Малта пыракан ĕççынни депутачĕсен ялсоветне памалли куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, ĕççыннисен массисене государство ĕçне активлăн явăçтарнăшăн, ялсовет çумĕнчи ялан-хи комиссисен ĕçне лайăх организациленĕшĕн, ялсовет территорийĕнчи колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх туса ирттернĕшĕн, тырпул тухăçлăхне пур культурăсем енĕпе те планра кăтартнинчен ытларах ӳстернĕшĕн, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен тултарнăшăн, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ирттерсе тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли плана кашни колхоз тăрăх пурнăçланăшăн, шкулсене вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленĕшĕн, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренсе явăçтарнăшăн, ялхуçалăх ĕçĕсене тунă чухне колхозсенче ачасен учрежденийĕсене вăхăтра йĕркеленĕшĕн, клубсемпе вулав çурчĕсен, колхозсенчи хĕрлĕ кĕтессен тата библиотекăсен ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн, политикăпа çутĕç учрежденийĕсене çуракине, тырпул пухса кĕртес ĕçе тата ытти кирлĕ ĕçсене ăнăçлăн явăçтарнăшăн, ялсовет территорийĕнчи сывлăха сыхлав учрежденийĕсен ĕçне кăтартуллăн йĕркеленĕшĕн, халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана тата бюджета пур тĕлĕшпе те вăхăтра тултарнăшăн, вăрçă обстановкине пула фронта куллен пулăшас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене лайăх пурнăçланăшăн, ялсовет территорийĕнчи промышленность предприятийĕсем тата промысла артелĕсем производство планĕсене тултарнăшăн, ялхуçалăхне лайăхлатас ĕçре ĕççыннисен пултарулăхĕпе анлăн усă курнăшăн, санитари культурине организацилессишĕн тимлĕн кĕрешнĕшĕн, шкулсемпе сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен тата политикăпа çутĕç учрежденийĕсене пулăшса тăрас ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн парать.

Малта пыракан ĕççынни депутачĕсен ялсоветне памалли куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава çулталăкра пĕр хутчен ялсоветсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене тунă хыççăн Сталинла Конституци кунĕ тĕлне параççĕ. Вăл ялава илекен ялсовета, ялсовет территорийĕнчи учрежденисемпе организацисенчи ĕçре палăрнă работниксене премилеме, 15.000 тенкĕ укçа параççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн малта пыракан ĕççынни депутачĕсен ялсоветне памалли куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ.

Малта пыракан ялсовет

Наратчакки ялсоветне Октябрьски районĕнче лайăх ĕçлекен ялсовет, тесе шутлаççĕ. Мĕнпе палăрса тăрать-ха вăл ытти ялсоветсенчен? Куыйту çине ялсоветăн кулленхи ĕçĕсем лайăх ответ параççĕ. Ялсовет укçа-тенкĕ пухмалли 1943 çулхи плана срокчен тултарнă. Государствăн Иккĕмĕш Военнăй заемне 106.500 тенкĕлĕх, укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине 25.000 тенкĕлĕх сарнă. Çапла вара ялсовет иртнĕ çулта тăван çĕршывпа фронта планран ирттерсе 193.500 тенкĕ укçа-тенкĕ панă.

Ялсовет территорийĕнчи колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тата аш-какай памалли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртнĕ. «Молния» тата «Опыт» колхозсем государствăна аш-какай памалли кăçалхи плана та тултарнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем государствăна 5.800 пăт тырă, 710 пăт çĕрулми сутнă.

Ялсоветри колхозсем ирĕке кăларнă районсене 5 лаша, 2 ĕне, 8 пăру, 12 сысна, 10 сурăх панă. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Наратчакки ялĕнчи «Красное Сормово» колхоз 17 çемьене вутă турттарса панă. Вăрманкассинчи «Культура» колхоза фронтовик амăшĕн А. Тарасовăн пӳртĕнчи кăмаки йăтăнса аннă шулнă. Ялсовет ăна çĕнĕ кăмака туса панă.

Ялсовет çумĕнче 4 комисси ĕçлет. Вĕсем пурте ялсовет ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Агитколлектив та лайăх ĕçлет.

Халĕ колхозсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕçсем пыраççĕ.

И. АНДРЕЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 8-мĕшĕнче СИВЕРСКИЙ станцийĕнчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, çав шутран МОЛОСОВО, ПЕТРУШИНА ГОРА, ТОРКОВИЧИ, ОВИНОВИЧИ, БОРЩЕВО, КАШИЦЫ ятлă ялсене тата ТОРКОВИЧИ ятлă чугун çул станцине.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвел-анăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКĂПА ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, ОРЛОВЕЦ, КСАВЕРОВКА, ЗАВОДЯНКА, ХЛЫСТУНОВКА, ВАЛЯВА, ЕМЧИХА, ЛОЗКИ, ВОРОБИЕВКА, СЛОБОДА, МИРОНОВКА ятлă ялсене тытса илнĕ. Çав вăхăтрах ЗВЕНИГОРОДКА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсем патне татса кĕме хăтланнă нимĕç танкĕсемпе пехотин атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, флангран УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, малалла наступлени туса пырса, нимĕçсен НИКОПОЛЬ районĕнчи группировкине çĕмĕрсе тăкнă та февралĕн 8-мĕшĕнче Украина промышленноçĕн пысăк центрĕ пулса тăракан НИКОПОЛЬ хулине штурмласа тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, ДНЕПР шывĕн сулахай енче нимĕçсен НИКОПОЛЬ хулинчен кăнтăртарахри плацдармĕнчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, 4 кун хушши малалла тапăнса пырса, тăшманăн 7 пехотнăй дивизине йывăр поражени тӳстернĕ, вара плацдармăн пĕтĕм тăршшĕпех ДНЕПР шывĕ патне пырса тухнă. Çак операцие пула пирĕн çарсем нимĕçсен ДНЕПР шывĕн сулахай енчи 120 километр сарлакĕш те 35 километр тăршшĕ вырăн йышăнса тăракан плацдармне, операцисем тăвас енчен паха пулса тăраканскерне, пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем Запорожье облаçĕнчи район центрĕсене — КАМЕНКА хулине тата БОЛЬШАЯ ЛЕПЕТИХА ятлă яла тытса илнĕ, çавăн пекех тата 40 ял ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче ИВАНОВСКОЕ, НОВАЯ ДНЕПРОВКА, НОВОЕ ВОДЯНОЕ, ДНЕПРОВКА, ВОДЯНОЕ, БОЛЬШАЯ ЗНАМЕНКА, ВЕРХНИЙ РОГАЧИК, КАРАЛЬ-ДУБИНЯ, УШКАЛКА, БАБИНО, НИЖНИЙ РОКАЧИК, МАЛАЯ ЛЕПЕТИХА ятлă пысăк ялсене. Çав çапăçусенче пирĕн çарсем çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: танксем—53, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—217, минометсем—118, пулеметсем—370, автомашинăсем—1.277, çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем—570. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 15.000 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—24, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—392, минометсем—180, пулеметсем—473, винтовкăсемпе автоматсем—4.000 ытла, автомашинăсем — 1.686, тракторсемпе тягачсем—86, мотоциклсем—181, радиостанцисем —18, çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем — 1.018, боеприпас, апат-çимĕç тата ытти çар пурлăхĕн склачĕсем—20. 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Февралĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 51 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ӳкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 9-мĕшĕнче ЛУГА хули енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, Ленинград облаçĕнчи ОРЕДЕЖ ятлă район центрĕпе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăça-çапăça халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ТУРОВКА, ВОЛОК, КРАСНЫЕ ГОРЫ, КЕМКА, ДОЛГОВКА, МАЛОЕ ЗАМОШЬЕ, БОЛЬШОЕ ЗАМОШЬЕ, ГОБЖИЦЫ, ВАНЬКОВО, ХАБАЛИНКА, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, МАЛЫЕ ВЛЕШКОВИЧИ, БОЛЬШИЕ ВЛЕШКОВИЧИ ялсене тата ЗАКЛИНЬЕ чугун çул станцине.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сĕнтере-сĕнтере, çапăçса малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Вăл шутра— РАДОЛИ, ОЗЕРОВО, НОВЫЕ ГУСИНЫ, ИЛЕМЦЫ, САМОКРАЖА, РАДЖА, ЗМИЕВА ГОРА, ВОРОНИНО тата МОЙКА чугун çул станцийĕ.

ЗВЕНИГОРОДКĂПА ШПОЛА хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтересшĕн çапăçнă. Çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, Киев облаçĕнчи ГОРОДИЩЕ ятлă район центрне тата МОСКАЛЕНКИ, ВЫГРАЕВ, БУДКОВКА, ДЕРДЕНЬ, РУДЕНКОВ, САХНОВКА, БРОВАХИ, КИРИЛЛОВКА ялĕсене тытса илнĕ.

АПОСТОЛОВО хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, 40 ял ытла йышăннă. Вăл шутра—РАДУШНОЕ, АЛЕКСАНДРОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, МАЛАЯ КОСТРОМОЧКА, АНДРЕЕВКА, МЕРЕЖИНО, ЗЕЛЕНЫЙ ЛУГ.

НИКОПОЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Днепропетровск облаçĕнчи ЧКАЛОВО район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата ЛАПИНКА, СУЛИЦКОЕ, АЛЕКСЕЕВКА, КАЛУЛОВКА, ПОКРОВСКОЕ, ПЕРЕВИЗСКИЕ ятлă ялсене тата СИРКО, ЧЕРТОМЛЫК чугун çул станцийĕсене йышăннă.

Февралĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Луга хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Ленинград облаçĕнчи Оредеж ятлă район центрĕпе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ. Ку районра нимĕçсем паха позицисем йышăнса çирĕпленсе ларнă та хытă хирĕç тăнă. Пирĕн боецсем Оредежпа Батецкая хушшинчи чугун çула татнă та тăшманăн сылтăм флангне вăйлăрах хĕсме пуçланă. Пирĕн Оредеж шывĕ тăрăх наступлени туса пыракан ытти чăссем нимĕçсене çурçĕр енчен çавăрса илнĕ. Темиçе енчен те татăклă пырса çапса, пирĕн çарсем тăшмана аркатса тăкнă та Оредежа йышăннă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Кун каçа пирĕн чăссем нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла тасатнă. Çав çапăçусенче тăшманăн 1.200 салтакĕпе офицерне çитти пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Тăшман хытă хирĕç тăнă, темиçе хутчен те контратакăна кĕрсе-кĕрсе кайнă. Пĕр соединени чăсĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Мойка чугун çул станцине тата темиçе ял тытса илнĕ. Гитлеровецсене пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 18 тупă, 70 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерессшĕн çапăçнă. Пĕр соединени чăсĕсем, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, хаяр çапăçу хыççăн нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ узелне—Киев облаçĕнчи Городище ятлă район центрне йышăннă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра 26 тупă. Тепĕр участокра совет боецĕсем, питех те начар çанталăк пулнă пулин те, шыв урлă каçнă та темиçе ял йышăннă. Çав ялсемшĕн çапăçнă чухне гитлеровецсене пĕр тине çити пĕтерсе тăкнă тата тыткăна чылай илнĕ. Звенигородкăран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн хăйĕн çавăрса илнĕ группировкине пулăшма кĕрсе кайма хăтланнă танкĕсемпе тата пехотипе ăнăçлă çапăçнă. Çав çапăçусенче нимĕçсенне 42 танк, 6 бронетранспортер тата 90 автомашина пĕтерсе тăкнă, темиçе юсавлă танк тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Никополь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Днепропетровск облаçĕнчи Чкалово ятлă район центрне тытса илнĕ. Чкаловăшăн çапăçнă чухне нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 18 тупă, 10 тягач, 60 пулемет, 200 автомашина, пĕр пысăк тырă склачĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Пирĕн тепĕр соединени боецĕсем темиçе ял тытса илнĕ, гитлеровецсен икĕ ротине тыткăна илнĕ.

* * *

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 4.000 тонна таякан судине шыва путарнă.

* * *

Белоруссире кĕрешекен партизансен темиçе ушкăнĕ Минск облаçĕнчи пĕр хулана кĕрсе кайнă та офицерсем пурăнакан гостиницăна сирпĕтсе янă. 32 нимĕç офицерĕ вилнĕ. Партизансен тепĕр ушкăнĕ икĕ ресторана сирпĕтсе янă. Кунта çĕр гитлеровец ытла вилнĕ е аманнă. Барановичи облаçĕнчи партизансем нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенире пĕр паровоз, 8 бензин цистерни, автомашинăсем тиенĕ 6 платформа тата танксем тиенĕ 2 платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

* * *

Çак кунсенче фронтри участоксенчен пĕринче Хĕрлĕ Çар енне тăватă нимĕç салтакĕ тарса каçнă. Тарса каçакансем хăйсемпе пĕрле пĕр фельдфебельпе тепĕр ефрейтора илсе пынă. Тарса каçнă Арнольд К. çапла каласа кăтартнă: «Эпир ĕнтĕ тахçантанпах фронтра, вăйлă çапăçусенче темиçе хут та пулнă, вилĕме хăнăхса, вилĕмрен хăрами пултăмăр. Анчах та Германие çавăн чухлĕ асап, хуйхă кӳрекен Гитлершăн пирĕн пачах та вилес килмест. Вырăссем енне тарса каçма шут тытнă хыççăн эпир тĕплĕ сӳтсе-явса план йышăнтăмăр. Май килнĕ вăхăт çитрĕ те, эпир фельдфебельпе ефрейтор тăнă блиндажа вăркăнса кĕрсе кайрăмăр, вĕсене хамăрпа пĕрле вырăссем енне каçса тарма сĕнтĕмĕр. Фельдфебель хирĕç тăма хăтланчĕ, анчах та эпир унăн хĕçпăшалне туртса илтĕмĕр. Аллисене çыхса лартрăмăр. Ефрейтор хăй ирĕкĕпех пирĕнпе пĕрле кайма килĕшрĕ».

Тарса каçакансем хăйсемпе пĕрле пĕр пулемет тата темиçе винтовка илсе килнĕ.

Укçапа япаласен лотерейин билечĕсене васкавлăн алла парса пĕтермелле

Орденлă Чăваш республикинчи ĕçсынисем, Совет Союзĕнчи ытти ĕççыннисем пекех, укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине нихăçанхинчен пысăк активлăхпа çыранса илсе, укçине те çийĕнчех парса татрĕç. Предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем вăл лотерейăна уйăхри ĕç укçин 30—50 процентĕ чухлĕ çырăнчĕç.

Чăваш республикинче укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билетне 33 миллион та 645 пин тенкĕлĕх сарнă, урăхла каласан, укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин билетĕнчен икĕ хут ытларах сарнă. Пуринчен ытла ку ĕç Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Шупашкар, Ишлей, Октябрьски, Канаш районĕсенче лайăх кайрĕ. Вĕсенче лотерея билечĕсен укçисене те билетсене сарнă вăхăтрах пухса пĕтернĕ, билечĕсене алла панă. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пыма колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек туса пыни нумай пулăшрĕ.

Анчах та Кувакино, Пăрачкав, Улатăр, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсен укçине пухасси тата вăл билетсене илнĕ çынсене алла парасси калама çук вăрахăн пулса пырать. Вĕсем 1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче Мускавра укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин вылявĕ пулса иртессине шута илмеççĕ. Ку выляврa 500 миллион тенкĕлĕх 2.500.000 выляв пулмалла, вĕсен шутĕнче 2.437.200 укçа вылявĕсем, 62.800 япаласен вылявĕсем пулаççĕ. Выляврa хаклă тăракан япаласем пулаççĕ.

Кун умĕнхи выляврa, укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин вылявĕнче, Чăваш республикинчи ĕççыннисем 1 миллион тенкĕлĕх выляса илнĕ, кунсăр пуçне пысăк япаласем те выляса илнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Миронова юлташ каракультен çĕленĕ пальто выляса илнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ф. О. Лашин юлташ 25.000 тенкĕ укçа выляса илнĕ. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур.

Халĕ финанс работникĕсемпе сберкасса работникĕсен умĕнче укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕн укçине пĕтĕмпех пухса, билечĕсене салатса парас задача тăрать. Ĕççыннисене çак лотерея билечĕн пулас вылявĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, çак ĕçе ăнăçлăн туса ирттермелле.

Ĕççыннисем! Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене çак кунсенчех илме васкăр, укçине те парса татăр. Эсир çак ĕçе хăвăртăн туса пыни фронтпа çĕршыва пулăшни пулса тăрать.

А. МИХАЙЛОВ.

Ирĕке кăларнă районсене пулăшма

СĔНТĔРВĂРРИ. Нимĕç захватчикĕсенчен мухтавлă Хĕрлĕ Çар кунсерен çĕршер ялсемпе хуласене ирĕке кăларса пырать. Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Шуршăл ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ ял» колхоз паянхи куна ирĕке кăларнă районсене яма 2 лаша, 3 ĕне тата 5 сысна уйăрса хучĕ.

И. ФИРСОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Вырăнти удобренисене пикенерех хатĕрлемелле

СĔНТĔР. («Чăваш Коммуни» корр.). Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха районри чылай колхозсем хутшăннă. Малта пыракан колхозсем, тырпул тухăçлăхĕ çĕре çемçетнинчен килнине асра тытса, халĕ çине тăрсах тислĕк кăлараççĕ, фекали турттараççĕ, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Орининăри «Красное Сормово» колхоз уя 1650 лав тислĕк кăларнă, 75 центнер кĕл, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 50 гектар çинче юр тытнă. Ку колхоз членĕсем вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе çак уйăхлăх кунĕсенче татах та вăйлатрĕç. Район центрне, Сĕнтĕре, темиçе лавпа кайса 50 центнер фекали турттарса пынă, ăна тислĕкпе сийĕн-сийĕн хутăштарса хунă. Колхоз председателĕ Майков юлташ тислĕк турттармалли заданисене кашни бригадăна панă, вĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслесех тăрать.

«Колос» колхоз (председателĕ коммунист Тямин юлташ) хĕллехи агротехника ĕçĕсен планне ăнăçлăн тултарнă. Пурĕ 2 пин лав тислĕк кăларнă, 80 центнер кĕл, 50 центнер фекали пухнă. Тислĕк кăларас тĕлĕшпе кунта кашни кун 12—13 лаша ĕçлет. Колхоз çуракине те хатĕрленсе çитнĕ. Колхозниксем халь агротехникăна вĕренеççĕ.

Вырăнти удобренисене хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе çавăн пекех Адабай ялсоветĕнчи «Крестьянин», Свердлов ячĕпе тăракан, Оринино ялсоветĕнчи «Красная Чувашия», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем тата Кашмашри «Свобода» колхоз хастарлăн ĕçлеççĕ. «Свобода» колхоз (председателĕ И. Петровский юлташ) 3 пин лав тислĕк кăларнă, 80 центнер кĕл, 40 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Уя тислĕк кăларнă çĕрте кунта куллен 30—40 лаша ĕçлет. Тислĕк турттарас ĕçре Краснова бригади малта пырать.

Анчах районра вырăнти удобренисене хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнман колхозсем те пур-ха. Уйăхлăх çурри ытла иртрĕ пулин те, Муркаш ялсоветĕнчи колхозсем удобренисене хатĕрлеме тивĕçлипе тытăнман. Муркашри «Авангард» колхоз пысăк колхоз. Унăн уйăхлăхра 3 пин лав тислĕк кăлармалла. Çапах та вăл хĕле кĕнĕренпе тислĕк 611 лав кăна кăларнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 5 центнер çеç пухнă. Çак кирлĕ ĕç ялсоветри «Знамя труда», Сталин тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче те сÿрĕк пырать. Вĕсен председателĕсем: «Çур çитмен-ха, ĕлкĕрĕпĕр», тесе шутлаççĕ пулас.

Вырăнти удобренисене хатĕрлес ĕçе хакламанни Çатракасси ялсоветĕнчи колхозсенче те палăрать. Çатракассинчи «Малалла» колхоз иртнĕ çулта начар тырпул туса илчĕ. Унăн пĕрчĕллĕ тырăсем кашни гектартан вăтамран 6 центнер çеç тухрĕç. Анчах колхоз председателĕ И. Мартынов юлташ çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман. Колхоз ку таранччен 420 лав çеç тислĕк кăларнă, юр тытмалла пĕрех. Ятманри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та пачах ялăх ĕçлеççĕ.

Çĕньял Хуракассинчи «Пионер» колхоз, район руководителĕсен шучĕпе лайăх ĕçлекенскер, кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн начар кĕрешет. Уйăхлăх пуçланаччен уя пĕр лав та тислĕк кăларман, фекали хатĕрлемен, юр тытман. Тислĕк тăкма январĕн 24-мĕшĕнче тин тытăнчĕç.

Кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕç уйрăм колхозсенче çакăн пек начар пыни райçĕрĕç пайĕнчен те килет. Райçĕрĕç пайĕ (заведующийĕ И. Кожаков юлташ) вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх çинчен колхозсене çийĕнчех пĕлтермен, уйăхлăхра тумалли ĕçсен заданине колхозсене январĕн 24—25-мĕшĕсенче тин çитерсе пачĕ.

Районра торф кăларас тата фекали хатĕрлес ĕçсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Торф кăларма нумай колхозсем тытăнман. Сăлтавĕ — колхоз председателĕсем калан тăрăх, торфлă вырăнсем çуккинче. Ку тĕрĕс мар. Пĕр Муркаш улăхĕнче кăна тем таран торф кăларма пулать. Иртнĕ çулсенче унта ăнăçлăнах кăларнă. Анчах кăçал, районри руководительсем çирĕппĕх хушман пирки, колхоз председателĕсем торфлă вырăнсене пырса та пăхман.

Вырăнти удобренисене — торфпа фекалие — хакламанни пулмалла мар. Вĕсене планпа палăртнă чухлех хатĕрлемелле. Райçĕрĕç пайĕн çак ĕçе çирĕппĕх ертсе пымалла.

Т. ИВАНОВ.

Çуракине хатĕрленмеççĕ

Шупашкар районĕнчи «Красное знамя» колхозра çуракине çак вăхăта çитсе те хатĕрленме тытăнман. Вăрлăхсене сортласси те сÿрĕк пырать. Вырăнти удобренисене пухмаççĕ, тислĕке те уя кăлармаççĕ.

Колхозри лашасем валли ут таврашĕсем çитмеççĕ. 4-мĕш бригадăра 12 ĕç лашине, вĕсем валли пурĕ те 8 хăмăт, 7 ĕнерчĕк кăна, йĕвенсемпе тилхепесем те çитмеççĕ.

Колхозра çакăн пек çитменлĕхсем пурри колхозниксене кÿрентерет. Вĕсем çак çитменлĕхсене пĕтерес пирки правлени ларăвĕнче сÿтсе-явса, ĕçе пикенерех туса пыма ыйтаççĕ. Анчах та колхоз председателĕ Максимов юлташ ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çуракине халех тивĕçлипе хатĕрленме тытăнмалла.

Д. ШУÇАМ.

Шкул ачисем юр тытаççĕ

ИШЛЕЙ. Василькасси ялсоветне кĕрекен «Депутат» колхозри пионерсемпе шкул ачисем Борисов Анатолий пуçарнипе уя юр тытма кайрĕç. Ир кайнăскерсем каçхине тин таврăнчĕç. Вĕсем пĕр кунта 20 гектар çинче юр тытнă. Çитес канмалли кун татах юр тытма уя каяççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Элементсен периодикăлла системине тупнăранпа 75 çул иртни

Пирĕн çĕршыври наука тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисемпе çынсем вырăс наукин историйĕнчи питĕ пысăк палла та чаплă датăна—Д. И. Менделеев элементсен периодикăлла системине тупнăранпа тата вырăссен хими обществине тунăранпа 75 çул иртнине паллă тăваççĕ. Çав обществăна кайран Менделеев ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри хими обществи туса хунă.

Аслă ученăй Д. И. Менделеев периодикăлла закон çинчен малтанхи хут 1869 çулхи мартра каласа панă. Хими наукишĕн çĕнĕ самана пуçланса кайнă. Менделеев ун чухне паллă пулман элементсем — галий, скандий — пуррине кăтартса панă, шултăра калибрлă тупăсем валли тĕтĕмсĕр çунакан çĕнĕ тар—пирсколлодий тупнă, халăх хуçалăхĕшĕн питĕ паха пулса тăракан ыйтусем кăларса тăратнă: çĕркăмрăкне çĕр айĕнчех газласси çинчен, пимĕре тÿрех рударан тупасси çинчен тата ытти çинчен те. Нефть технологийĕн ыйтăвĕсене, Уралти металлургие тата Донбасри çĕркăмрăк промышленноçне аталантарасси çинчен ыйтусене çĕнĕлле лартнă.

Хими обществи виç чĕрĕк ĕмĕр хушшинче наукăпа техникăна аталантарас тĕлĕшпе тата наука кадрĕсене вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç тунă. Общество ĕçне пирĕн çĕршыври чи паллă химиксем—Менделеев (пĕрремĕш председатель), Марковников, Курнаков, Тищенко, Фаворский—хутшăнса ĕçленĕ. Юлашки 40 çул хушшинче Менделеев ячĕпе тăтăшах пулса пынă съездсем хими наукин пур отраслĕсенче те паха ĕçсем тунă.

Совет правительстви Менделеев ятне ĕмĕрлĕхе сыхласа хăварнă: Мускаври химипе технологи институтне тата Пĕтĕм Союзри хими обществине (ăна халь академик Бах ертсе пырать) Менделеев ятне панă. Наука тĕлĕшпе питĕ паларса тăракан ĕçсемшĕн Менделеев ячĕпе премисем памалла тунă.

Пĕтĕм Союзри хими обществин юбилейлă чаплă ларăвĕнче периодикăлла законпа унăн авторĕ çинчен тата пирĕн хими науки 75 çул хушшинче мĕнле аталанса ÿсни çинчен докладсем пулаççĕ. Менделеев ячĕпе совет ученăйĕсен наукăллă статьисен сборникĕ тухать. (ТАСС).

ЛАШАСЕНЕ ХИСЕПЕ ХУРАÇÇĔ

ШАХАСАН. Малти Антавăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра лашасене пит хисепе хурсах каймаççĕ: ăçта май килчĕ, çавăнта тытаççĕ те каяççĕ. Çакăн пиркиех ĕнтĕ колхозра лашасем начар, виçĕ кĕсре çак кунсенчех хăм пăрахрĕ. Хăшпĕр каçхине лашасене çителĕклĕ апат памаççĕ.

Колхозăн лашасене тăрантарма апат çителĕклĕ мар. Анчах та вылăх апатне перекетлĕ тыткалани çук-ха. Çураки тунă чух лашасене çитерме фураж та уйăрса хуман, утă та çителĕклĕ таран çук. Ĕç çакăн пек япăх тăрсан та, колхоз председателĕ Михайлсвпа старши конюх Власова юлташсем ĕçе аванлатас пирки нимĕн те тумаççĕ.

Г. ЕФИМОВ.

ТАСС опроверженийĕсем

Ют çĕршывсенчи хаçатсем çапла пĕлтернĕччĕ: февралĕн 7-мĕшĕнче е 8-мĕшĕнче каçхине совет авиацийĕ Эстонири Таллин хули çине бомбăсем пăрахнă пулать.

ТАСС çапла калама полномочи илнĕ: çавăн пек пĕлтерни вăл пĕрт-те тĕрĕс мар.

* * *

Шведсен «Дагенс нюхетер» ятлă хаçачĕ хăйĕн Цюрих хулинчи корреспонденчĕ панă телеграммăна пичетлесе кăларнă. Телеграммăра каланă тăрăх, София хулине «вырăссен çар атташипе Согоров полковникпа пĕрле ĕçлеме темиçе вырăс офицерĕ пынă», Совет Союзĕпе Болгари хутшăнса тăрас ĕç улшăнма пуçланине кăтартакан паллăсем пур т. ыт. те.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: «Дагенс нюхетер» хаçат пичетлесе кăларнă телеграммăра калани—пĕтĕмпех шутласа туртса кăларнă япала. «Совет Союзĕн çар атташине Согоров полковника та» шутласа туртса кăларнă.

Ют çĕршывсенче

США Финляндие панă сĕнÿ пирки Хэлл калани

ВАШИНГТОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмран çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Финляндие вăрçăран хăварпрах тухма сĕннĕ, тенĕ. Çак ыйту пирки пичет представителĕсене ответлесе, США-н государственнăй секретарĕ Хэлл çапла каланă: «Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви, халиччен пĕр хут кăна мар тунă пек, нумай пулмасть шутласа иртнĕ сăлтавпа усă курса, Финлянди правительствине Финляндия Германипе кавар лашса США-н союзникĕсемпе, çав шутрах Совет Союзĕпе тата Британипе малашне те вăрçас пулсан, çакăншăн пĕтĕмĕшпех Финлянди правительстви ответлă пулса тăрать», тесе пĕлтернĕ.

США-н представительсен палати хĕçпăшаллă вăйсенче тăракан çынсем çитес суйлава хутшăнасси çинчен йышăннă решени

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США-н хĕçпăшаллă вăйĕсенче тăракан çынсене çитес суйлава пур çĕрте те пĕр пек йĕркепе хутшăнтарма Рузвельт сĕннине США-н преставительсен палати йышăнман. 164 çын çав сĕнÿ майлă, 215 çын ăна хирĕç сасăланă.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: представительсен палати хĕçпăшаллă вăйсенче тăракан çынсем çитес суйлава хутшăннине контрольлеме штатсене ирĕк паракан законопроект йышăннă, 328 çын çав законопроект майлă, 64 çын ăна хирĕç сасăланă.

Рузвельт çав законопроекта—вăл «пирĕншĕн çапăçакан салтаксемпе моряксене улталани» пулса тăрать, тесе каланă.

Германири лару-тăру

ЖЕНЕВА, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарин «Арбейтер цейтунг» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Германирен илнĕ хыпарсем тăрăх, унта террор çĕнĕрен вăйланса кайнă. Поражени тÿсес шухăш-кăмăллă пулнăшăн тата Гитлерăн режимне хирĕç ĕçленĕшĕн вĕлерессн çаплах чарăнмасть.

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио гитлеровецсен агентствин—Германи информаци бюровĕн пĕлтерĕвне сарать. Çав пĕлтерÿре Берлинра 2 нимĕçе вĕлерни çинчен каланă. Вĕсенчен пĕрне — çар заводĕнче ĕçлекен 43 çулхи рабочие — «çынсен пысăк ушкăнĕ умĕнче влаçа хирĕç пыракан ĕçсем тума хĕтĕртсе сăмах каланăшăн» айăпланă. Тепĕрне — заводри служащие — заводри столовăйра поражени тÿсес майлă каланăшăн айăпланă.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен «Фелькишер беобахтер» ятлă фашистла хаçачĕ предприятисенчи политикăлла шухăш-кăмăлсем çинчен калакан статьяра полицие кашни уйрăм рабочипе служащие сăнаса тăма хушать. Кашни предприятире рабочисемпе служащисен личнăй карточкисем пулмалла, тет хаçат. Çав карточкăсем çине предприятире ĕçлекен рабочисем «политика тĕлĕшĕнчен мĕн чухлĕ шанчăклă пулнине» кăтартакан паллăсене пурне те çырса хурас пулать. Çав статья çырнинчен çапла тухать: çав карточкăсене çырма кирлĕ шпионла даннăйсене Гитлер партийĕн предприятисенчи представителĕсем, мастерсемпе предпринимательсем тата ытти «шаннă çынсем» тăратмалла.

ЛАТВИРИ, ЛИТВАРИ ТАТА ЭСТОНИРИ ПАРТИЗАНСЕН АКТИВЛĂХĔ

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио нимĕç колонисчĕсем Латвирен, Литваран тата Эстонирен васкавлăн тухса тарма пуçлани çинчен пĕлтерет. Çак япала пуринчен ытла партизан отрядĕсен активлăхĕ ÿснинчен килет. Лондонри радио, Швецири радио пĕлтернипе усă курса, çапла пĕлтерет: çав партизансен хĕçпăшаллă отрядĕсем Финн заливĕ хĕрринче çапăçакан Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пулăшаççĕ, тет.

ЛИТВАПА ЛАТВИРЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ТЕРРОРĔ АССА КАЙНА

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин «Афтон Тиднинген» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: Литвара оккупациллĕ влаçсем халăха ирĕксĕр мобилизацилесси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Полици влаçĕсем çапла пĕлтернĕ: влаçсене пăхăнман çынсене пурне те çар судне параççĕ, çав судсен приговорĕсене çийĕнчех пурнăça кĕртеççĕ, тенĕ.

Пĕтĕм Латвире чрезвычайнăй положени туса хунă. Çакăн пек распоряжени пичетлесе кăларнă: «тăшман агенчĕсем» çинчен пĕлтермен çынсене тата халăха влаçсене ан пăхăнăр тесе хĕтĕртекен çынсене пурне те çар судне памалла, вĕлерме йышăннă приговорсене çийĕнчех пурнăça кĕртмелле, тенĕ çав распоряженире.

МИХАЙЛОВИЧ ГЕНЕРАЛА ТАСА ÇЫН ПЕК КĂТАРТМА ХĂТЛАННИ

КАИР, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Югославин Каиртн правительствин пуçлăхĕ Пурич господин çав правительство çумĕнче тăракан совет посолне çыру панă. Пурич господин шухăшĕпе, çав çыру çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхмалла мĕн. Пурич господин каланă тăрăх, çав çырăва тыткăнри совет çыннисем çырнă, вĕсем Германи лагерĕсенчен тарса, Михайлович генералăн четникĕсен отрядне лекнĕ (Михайлович генерал вăл Пурич господинăн кабинетĕнче çар министрĕ пулса ĕçлет). Михайлович генерал Югославири партизансене хирĕç кĕрешет пулин те, вăл Недич çыннисемпе тата нимĕçсемпе сыхăннă пулин те тата вăл фашизм еннелле туртăнать пулин те (çаксене ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ), çав çырăвăн авторĕсем Михайлович генерала питĕ мухтаса çыраççĕ пулать, ăна вĕсем «серб халăхĕн çулпуçĕ» тесе чĕнеççĕ пулать. Çав вăхăтрах çыру авторĕсем Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн пуçлăхне Тито маршала хытă вăрçаççĕ, анчах вĕсен сăмахĕсем суйи курăнсах тăрать.

Çырăва питĕ начар çырни — Михайлович генерала çавăн пек лайăх лăтса кăтартма тăрăшни йăлтах килĕшÿсĕр ĕç пулнине кăтартса парать.

Çав çырăва совет посолĕ Пурич господина каялла таврса панă, çырура калани чăн пулма пултарайманни уççăнах курăнса тăни çинчен каласа панă.

Нимĕçсен 10 дивизине çавăрса илнĕ районра

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Звенигородкăпа Шпола районĕсенчен çурçĕртерехри районра çавăрса илнĕ нимĕçсен вунă дивизине кунран кун, сехетсерен ытларах та ытларах хĕссе пыраççĕ. Пирĕн çав унккăн çурçĕр-хĕвелтухăç секторĕнче кĕрешекен чаçсем темиçе ял йышăнса илнĕ те тăшмана унăн Днепр шывĕ çыранĕнчи укреплениййĕсенчен хĕссе кăларнă, ăна кăнтăралла хăваласа янă. Çав секторта малалла наступлени туса пырса, пирĕн чаçсем чылай пысăк вăрмана тăшмантан тасатнă, фашистсене пысăк çухатусем тÿстернĕ.

Тăшмана кăнтăр енчен те туйăнтармаллах пыра-пыра çапаççĕ. Сăмахран, Ольшана ятлă район центрне, хирĕç тăмалли вăйлă узел туса хунăскерне, нимĕçсем хытă хÿтĕленĕ. Пирĕн çăмăллăн куçакан отрядсем çав ял патне кăнтăр енчен пырсан, унта тăшманăн çирĕп оборона пуррине пĕлнĕ. Командовани вăра çав вырăнтан айккипе иртсе кайма йышăннă. Атакăсем тунă пек кăтартмашкăн подразделенисен пĕр пайне çав ялтан кăнтăртарахри вырăнсех хăварнă, тĕп вăйсене—çав яла çурçĕр-хĕвеланăç енчен çавăрса илме янă. Çулйĕр пăсăлнине пăхмасăр, совет воинĕсем тăшман гарнизонне систермесĕр çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕпех пĕтерсе тăкнă. Документсем тата тыткăна лекнĕ нимĕçсем кăтартнă тăрăх, унта темиçе гренадерски полка аркатса тăкнă.

Ольшана ялĕшĕн çапăçнă чухне нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ, 23 танк, 11 тупă пĕтнĕ. Унсăр пуçне, пирĕн çарсем 160 автомашина, 14 тупă, 47 пулемет, 2 раци, 10 склад, темиçе кĕтÿ тытса илнĕ.

Ольшана ялĕнче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăксан, пирĕн чаçсем малалла кăнтăр-хĕвелтухăçнелле кайнă та нимĕçсен оборонин тепĕр опорнăй пункчĕ патне пырса çитнĕ. Унта нимĕçсем малтан питĕ хытă хирĕç тăнă. Тăшман иртенпе артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе тăнă, анчах, кăнтăр пĕлнелле унăн вут-çулăмĕ лăпланма пуçланă. Гитлеровецсем халран кайни паллă пулса тăнă. Вара пирĕн чаçсем хытăрах хĕсме пуçланă. Нимĕçсем ĕнтĕ пупиринчен ытла пăшалсемпе тата пулеметсемпе çеç пенĕ. Совет воинĕсем гитлеровецсен хирĕç тăракан уйрăм вырăнĕсене атакăлама тытăннă. Гитлеровецсем хирĕç тăнă пулин те, вĕсен кунçулĕ мĕнпе пĕтесси паллă пулса тăнă. Пирĕн пехотинецсем ялăн урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă, яла часах тăшмантан тасатнă. Çав çапăçура 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

Кравченко лейтенант ертсе пыракан подразделени тăшман оборонин начар çирĕплетнĕ вырăнĕсене лайăх пĕлнĕ хыççăн, çĕрле атака тунă та нимĕçсене хăйсем йышăнса тăнă рубежран хăваласа янă. Каялла чакакан гитлеровецсене хăваласа пыма уйрăм отряд уйăрса хунă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах подразделени командирĕ нимĕçсен флангне темиçе ушкăн автоматчик янă. Çав ушкăнсенчен пĕри нимĕçсен çапăçури речĕсем витĕр тухнă та тăшманăн чакакан çулпа параллеллĕ выртакан çул çине тухнă. Автоматчиксен тепĕр ушкăнĕ нимĕçсен тылне кĕрсе кайнă, тăшманăн хирĕç тăма суйласа илнĕ хушăри рубежĕнче засада тунă. Çав вырăнта гитлеровецсем чарăнса тăма шутланă пулнă, хăйсен речĕсене йĕркене кĕртсе, пирĕн наступлени туса пыракан подразделенисене организованнăй хирĕç тăма шутланă пулнă. Анчах пирĕннисем унта тăшмантан маларах çитнĕ, ăна вара хăйшĕн начар условисенче çапăçтарнă. Нимĕçсем, хăраса ÿксе, аслă çул еннелле пăрăннă, анчах унта та пирĕн засада патне пырса тухнă, вара çав çулпа параллеллĕ выртакан тепĕр çул патнелле кайнă, анчах унта та вăйлă вут-çулăм айне пулнă. Çав лайăх хатĕрлесе хурса хăюллăн туса ирттернĕ кĕске çапăçура Кравченко подразделенийĕн боецĕсем хăйсенчен йышлăрах тăшмана аркатса тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ тата нумай çынна тыткăна илнĕ.

Çавăрса илнĕ тăшмана пирĕн наступлени тăвакан чаçсем пур енчен те пыра-пыра çапаççĕ. Тылран тăшмана Днепр патĕнчи партизансем пыра-пыра çапаççĕ. Вĕсем нимĕç гарнизонĕсене хăюллăн тапăнаççĕ, засадăсем тăваççĕ, тăшманăн çыхăнăвне пăсаççĕ, тылне йĕркерен кăлараççĕ, штабĕсене арката-арката тăкаççĕ, фашистсене ялан хăратса тăраççĕ.

Гитлеровецсен командованийĕ çавăрса илнĕ çарсен группировкине патне татса кĕме хăтланма пăрахмасть-ха. Вăл унта резервсем илсе пырать, унăн танкĕсемпе пехоти ĕлĕкхи пекех хаяррăн контратакăсем тăваççĕ. Шпола хулинчен кăнтăртарахри пĕр участока 90 танк таран илсе пырса, нимĕçсем вĕсене пирĕн пĕр чаçăн подразделенине хирĕç контратакăна янă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă, совет боецĕсем тăшманăн 20 танкне пĕтерсе тăкнă, тăшмана пĕр пусăм та çĕр паман.

Пĕр кун маларах, пĕр участока 130 танкпа артиллери пухса тăратса, нимĕçсем хăйсен çавăрса илнĕ çарĕсем патне кăнтăр енчен кĕрсе кайма хăтланнă. Контратака хыççăн контратака тунă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тата пехотинецсем тăшманăн планне арпаштарса янă. Пĕр талăк хушшинче 32 танк тата темиçе çĕр салтакпа офицер çухатсан, нимĕçсем сахалтарах хĕсме пуçланă, вĕсем нимĕнле ăнăçу та тăваймаи.

Çавăрса илнĕ тăшман хирĕç тăни унăн çухатăвĕсене çеç ÿстерет. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем çав чаçсем пысăк йывăрлăх тÿсни çинчен каласа параççĕ. Гитлеровецсем вырăнти халăха калама çук хытă çаратаççĕ пулин те, нимĕçсен апат-çимĕç питĕ нумай çитмест. «Пирĕ темиçе кун ĕнтĕ çăкăр памаççĕ»,—тет тыткăна лекнисенчен пĕр пайĕ. «Продуктсен норми çинчен халь каласмалли те çук»,—тет тепĕр пайĕ. 544-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчи ефрейтор Оскар Аппель хăйĕн чаçĕн çухатăвĕсем çинчен çапла каланă: «Юлашки кунсенче çапăçнă хыççăн пирĕн полка пĕр батальон туса хучĕç. Виççĕмĕш ротăран çав батальона рота командирĕпе 4 салтак çеç кĕчĕç. Çав тăватă салтакран виççĕшне часах вĕлерчĕç, эпĕ вара—тăваттăмĕшĕ—тыткăна лекрĕм».

А. МАЛИБАШЕВ, Г. ОШАРОВСКИЙ.

КĔСКЕН

● Испанире Мадрид—Сан-себастьян линийĕ çинче экспресспа тепĕр поезд хирĕç-хирĕç пырса çапăннă. Крушени пулнипе 96 çын вилнĕ, 100 çын аманнă.

● Францири чугун çулсем çинче диверсиллĕ актсем ÿссе пынинчен шикленсе, гитлеровецсем поездсем çинче ĕçлеме ятарласа 300 чугун çул бригади тунă.

Ответлă редакторшăн **П. Т. ЗОЛОТОВ**

Чăваш АССР-ĕнчи промысла кооперацийĕн членĕсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: Чăвашпромстрахкассăн 1944 çулта Гутар республикинчи „Крутушка“ санаторие хупă туберкулезран сывалма кайма путевкăсем пур. Путевкăсене ВТЭК комиссийĕн заключенийĕ тăрăх ВСТУБ урлă е промартелĕн страхуполномоченнăйĕ урлă илмелле.

Чăвашпромстрахкасса

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00032 Типографии №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.